## Сад янăрать сар кайăк сассипе

Эпир ирех тăратпăр ĕç умне...
Хĕвел хĕртет, сапать ай шевлине.
Хирте каш кашласа тыр-пул ӳсет,
Çунатланса хăмла ай ешерет.
Сад янăрать сар кайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

Умра эпир ӳстернĕ çăкасем,
Шăнкăртатса юхан ай çырмасем,
Шур акăшсем иленнĕ кӳлĕсем,
Йăлтăртатса вылян ай çăлкуçсем.
Сад янăрать сар кайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

Ăмăртмалла вĕçеççĕ чĕкеçсем,
Мĕнле хитре вĕсен ай юррисем.
Мĕнле аван, хавас чун-чĕрене,
Тавах çĕршыв-аннемĕр илемне!
Сад янăрать сар кайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

*Давыдов-Анатри, В. Сад янăрать сар кайăк сассипе / В. Давыдов-Антари // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 259.*